ҪĔНĔ КĔНЕКЕ

# Тенкри хĕҫĕн вăйĕ-хăвачĕ

Чăваш кĕнеке издательствинче Владимир Степановăн "Тенкри хĕҫĕ" роман-этнофэнтезин пĕрремĕш кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Этнофентези тĕнче шайĕнче те – уйрăмах чăваш литературинче – ҫĕнĕ жанр. Тăван халăхăмăрта ҫак жанрпа ҫыракан авторсене урăх никама та пĕлместĕп. Тен, пур та пуль. Анчах та...




В.Степанов чăваш литературинче ҫĕнĕ ҫын мар, вулакансем ăна "Ăнтăлу, е Ҫĕр тыткăнĕ", "Шурăмпуҫ сĕчĕ", "Реципиент" хайлавĕсем тăрăх, "Пихампар йытти" – роман-этнофэнтези вуланипе пĕлме пултараççĕ. 2009 ҫулта унăн "Эфемероптера касĕ" кĕнеки те кун ҫути курнăччĕ. "Тенкри хĕҫĕ" – авторăн иккĕмĕш кĕнеки.

Кĕнекене алла илсенех хытă хуплашкари ўкерчĕк – вăкăр ҫинче ларса пыракан асамлă пике – вулакан чунне ăрăмласа тўрех Тибет тăрăхне илсе ҫитерет. Буддизм сĕмĕ, философийĕ пурри курăнать. Апла пулсан кĕнекери лару-тăру чăваш тĕнчипе ҫеҫ ҫырлахмасть, "Ҫĕр-аннемĕр" шайĕнчи пур халăх юмах-халапĕпе тачă ҫыхăнни сисĕнет. Каласа хăварассăм килет: ҫак ўкерчĕке М.Г.Фомирякова ўнерҫĕ ăсталанă. Асăрханса та пăлханса хуплашкана уҫатăп: "Тĕнчесар-ҫăлтăрсар уҫлăхсарĕнче упранакан, Ҫĕр-анне ҫинче Тенкри хĕҫĕ ятпа пĕлекен вăй-хăват ҫуй-кăралăн халалĕ", – тет автор сăмаха вашкăртса та вылятса. Ытарлă! Чĕлхи ҫеҫ мар – ăсĕ те пур! Вуланăҫемĕн чун мăнаҫланать: авторĕшĕн те, чăваш литературишĕн те...

Кĕнекене уҫатăп: малтанхи страницăра автор вулакана кĕске словарьпе паллашма ыйтать – шикленсех ўкрĕм! Хайлава вулама пуҫличчен малтан сăмахсен пĕлтерĕшне пĕлмелле иккен. Те вуласан юрать, те... Ăнланайăп-ши? Мĕн пулать те, мĕн килет – роман-этнофэнтезине вулама пуҫларăм! Хам та сисмерĕм – паянхи Шупашкар хулинче кулленхи пурнăҫпа пурăнакан Руслан шăпи мана самант хушшинчех чăваш Киреметтĕнчине сĕтĕрсе кĕчĕ. Автор чĕлхи питĕ ҫемҫе те вулакана ăнланмалла. Асăрхаттарни те кăлăхах пулчĕ – словарьсăрах йăлт палăрать! Метафорăсем, танлаштарусемпе гротесксем чĕлхене пуянлатаççĕ кăна. Уйрăмах, "вăтантарса-вĕлерсе", "каларĕҫкăтартрĕҫ" йышши иккĕллĕ глаголсем те, "Улт уралла, чĕр-тимĕр танк-туссем", "Ҫĕр-анне", "Ҫĕр-кукамай" йышши пĕлтерĕшсем те чăваш чĕлхин шухăш тĕшшине ҫивĕчлетсе анлăлатаççĕ, автор тавракурăмне пуянлатса вулакана тыткăнлаççĕ.

Автор хăй "...роман-этнофэнтези никĕсĕнче – чăваш юмах-халапĕсем" ҫеҫ тет пулин те, эпир кунта тĕрлĕ халăх мифĕсенчи сăнарсене те тĕл пулатпăр, тĕслĕхрен, Рустам – Иран халăх паттăрĕ, Кетцалькоатль – индеецсен турри. Акă, чăваш Киремечĕн "управçă-ертўҫин" – темиҫе ят: чăвашла ăна "Хăва" теççĕ, китайла – "Си-ванму", грекла – "Медуза горгона", еврейла "Ева" тата ытти те – пурĕ ҫĕр ят ытла. Ҫапла майпа пире автор, хамăр сисмесĕрех, тĕнче шайĕнчи ытти мифсемпе те паллаштарать! Вĕсен сюжечĕ-хăвачĕсене туйса пынăҫемĕн чăваш тĕнчи-пурнăҫĕ "Ҫĕр-аннемĕр" ҫинчи ытти халăхсемпе тачă ҫыхăннине куратпăр. Ҫакă ырăпа усал хирĕҫ тăрăвĕнче йĕркеленнĕ роман хăватне татах та вăйлăлатса пуянлатать. Вулакан тĕп сăнарсемпе пĕрле "тĕрлĕ вăхăтпа хутлăхри ҫапăҫусенче" вăй висĕ май "Ҫĕр-аннемĕр" ҫинчи Чăваш Ен, Китайпа Перури Наско сăрт-тўремĕ ҫийĕн ҫеҫ мар, тĕпсĕр уҫлăхра та пулса курать, романри пур сăнарпа чăвашла калаҫса тăван ҫĕр чăмăрне усалтĕселтен сыхлать.

В.В.Степановăн "Тенкри хĕҫĕ" роман-этнофэнтезийĕ пичетленсе тухни – питĕ вырăнлă! Мĕншĕн тесен, ăна фэнтези жанрне килĕштерекен ҫамрăксем ҫеҫ мар, чăваш тĕнчи-пурнăҫĕпе е тĕнче мифологийĕпе кăсăкланакан пур ҫын та интересленсе вуласса шанатăп. Кĕнекери паянхи кунҫул таппипе мифологи тĕнчи тачă ҫыхăнса тăни вулакана хавхалантарĕ ҫеҫ. Хайлавăн виççĕмĕш пайне чăтăмсăррăн кĕтетпĕр.

**Анатолий ХМЫТ,**
**ҫыравçă.**